Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнченпе тухать

6 (7646) № ✻ *Шăмат кун, 2009 çулхи январĕн (кăрлач) 24-мĕшĕ* ✻ *Хакĕ ирĕклĕ*

**Йыхрав**

## Черетсĕр 21-мĕш лару

Депутатсен районти Пухăвĕн председателĕн 2009 çулхи январĕн 22-мĕшĕнчи 32 № хушăвĕпе килĕшӳллĕн депутатсен районти Пухăвĕн черетсĕр 31-мĕш ларăвне кăçалхи январĕн 29-мĕшĕнче район администрацийĕн ларусен залĕнче 10 сехетре пухма йышăннă.

Ларура пăхса тухма кун йĕркине çак ыйтусене кĕртнĕ:

1. Муркаш районĕн Уставне улшăнусем кĕртесси çинчен.

2. Муркаш районĕн 2009 çулхи бюджетне улшăнусем кĕртесси çинчен.

3. Муниципаллă пичет изданийĕ пирки.

4. Политика репрессийĕсене пула шар курнисене реабилитациленĕ май вĕсен прависене çирĕплетес енĕпе ĕçлекен комисси çинчен.

5. Депутатсен Муркаш район Пухăвĕн йышăнăвĕсем хăйсен вăйне çухатни çинчен.

Депутатсен районти Пухăвĕн ларăвне ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсене, предприятисен, учрежденисен, организацисен ертӳçисене, район администрацийĕн управленийĕсемпе тата пайĕсен пуçлăхĕсене, депутатсен районти Пухăвĕ çумĕнчи Çамрăксен парламенчĕн членĕсене чĕнеççĕ.

**ЧР Президенчĕн стипендиачĕсем**

## Тăрăшулăллă, хастар специалист



***Ăслă, тăрăшуллă, илемлĕ, ырă кăмăллă... Тата ытти лайăх сăмахсем çырма пулать Елена Михайловна Кожевникова çинчен. 2006 çулта Чăваш патшалăх университечĕн медицина институтне пĕтернĕ хыççăн тепĕр çул интернатурăра ăсталăх пухнă вăл. Çав вăхăтранпа çамрăк педиатр Муркашри тĕп больницăра врач-дерматовенеролог тата пĕр вăхăтрах ача-пăча уйрăмĕнче педиатр пулса ĕçлет.***

***Медицина пулăшăвĕ ыйтма пыракансемпе, чирлĕ ачасемпе Елена Михайловна яланах ăшшăн, лăпкăн калаçать – сасси те сипленме пулăшать тейĕн. Тăрăшулăхĕпе хастарлăхне кура ĕнтĕ ăна Муркашри тĕп больницăри «Çамрăк чĕресем» ятлă çамрăксен канашĕн председателĕ пулма шаннă. Хăйĕн тивĕçĕсене яланах тулли кăмăлпа пурнăçланипе вăл ĕçтешĕсен хисепĕнче.***

***Кăçал вара Елена Михайловна тивĕçлипех ЧР Президенчĕн стипендиатки пулса тăчĕ.***

***Н. НИКОЛАЕВА***
***сăн ӳкерчĕкĕ.***

## Тăххăрмĕш стипендиат – А.О. Федоров

Хаçатăн январĕн 17-мĕшĕнчи номерĕнче кăçал Чăваш Республикин Президенчĕн Николай Федоровăн стипендине илме тивĕçнĕ районти пултаруллă та хастар яш-кĕрĕмĕн списокне пичетлесе кăларнăччĕ. Унта вĕсем саккăррăн. Çак кунсенче вара çак чыса тивĕçнĕ тепĕр яшăн ячĕ те паллă пулчĕ. Районти тăххăрмĕш стипендиат – «Хуçалăхсем хушшинчи «Моргаушская» строительство организацийĕ» хупă акционер обществин тĕп инженерĕ Александр Олегович Федоров. Пултаруллă çамрăка Президент стипендине илме тивĕç пулнăшăн саламланă май малашнехи ĕçре ăнăçусем сунатпăр. **В. ШАПОШНИКОВ.**

**Чăваш Республикин Президенчĕн Указĕ**

## Чăваш Республикинче ял тăрăхĕсенче çурт-йĕре комплекслă майпа компактлă лартас тата вĕсене тирпей-илем кĕртес енĕпе пилот проекта пурнăçласси çинчен

Ял хуçалăхне аталантарма лайăх майсем туса парас, XXI ĕмĕр ыйтăвĕсене тивĕçтерекен ял тăрăхĕсем йĕркелес тĕллевсемпе **çапла йышăнатăп:**

1. Чăваш Республикинче ял тăрăхĕсенче çурт-йĕре комплекслă майпа компактлă лартас тата вĕсене тирпей-илем кĕртес енĕпе пилот проекта пурнăçлама кирлĕ тесе шутлас.

2. Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн:

Чăваш Республикин ял тăрăхĕсен хушшинче асăннă проекта хутшăнас тĕлĕшпе конкурс йĕркелемелле;

ял тăрăхĕсенче çурт-йĕре комплекслă майпа компактлă лартас тата вĕсене тирпей-илем кĕртес енĕпе пилот проекта пурнăçа кĕртес тата пилот проекта хутшăнма ял тăрăхĕсене конкурс никĕсĕ çинче суйласа илес енĕпе ĕç ушкăнĕ тумалла;

Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн çак енĕпе яваплă органĕсене ял тăрăхĕсем ял тăрăхĕсенче çурт-йĕре комплекслă майпа компактлă лартас тата вĕсене тирпей-илем кĕртес енĕпе проектсем туса хатĕрленĕ чухне, пилот проектсене кĕртекен объектсем тĕлĕшпе проект документацийĕсене хатĕрлессине шута илсе, хутшăнтарассине тивĕçтермелле;

2009 çулхи пуш уйăхĕн 1-мĕшĕччен пилот проекта пурнăçа кĕртме хутшăнакан ял тăрăхĕсене конкурс урлă суйласа илмелле тата кирлĕ документсене Раççей Федерацийĕн Ял хуçалăх министерствине тăратмалла;

муниципалитет пĕрлĕхĕсен бюджечĕсене пилот проект шайĕнче ял тăрăхĕсенче çурт-йĕре комплекслă майпа компактлă лартма тата вĕсене тирпей-илем кĕртме пулăшма Чăваш Республикин республика бюджетĕнчен субсидисем уйăрса памалли йĕркене хатĕрлемелле;

Чăваш Республикин 2009 çулхи тата планпа пăхнă 2010 тата 2011 çулсенчи тапхăрти республика бюджетне улшăнусем кĕртесси çинчен сĕнӳсем тăратмалла.

3. Çапла палăртас: пилот проект шайĕнче Чăваш Республикин республика бюджетĕнчен субсидисем евĕр уйăракан патшалăх пулăшăвне çак ĕçсене тăвассине шута илекен мероприятисене пурнăçлама параççĕ:

ял тăрăхĕсен урамĕсемпе çул-йĕр сетьне тума тата вĕсене нормăпа пăхнă шайра тытса тăма;

социаллă пурнăçпа культура сферин объекчĕсене (шкулччченхи тата пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан учрежденисем, амбулаторипе поликлиника учрежденийĕсем, фельдшерпа акушер пункчĕсем, клуб йышши учрежденисем, спорт сооруженийĕсем тата площадкăсем (тума) юсаса çĕнетме);

ялсене шывпа тивĕçтерме тата шывпа тивĕçтерекен тытăма тытса пыма;

пурăнмалли çурт-йĕр йышлă лартма палăртакан строительство площадкине инженер ĕçĕсем тĕлĕшĕнчен хатĕрлеме;

территорисене тирпей-илем кĕртме (йывăç лартма, тасалăха тата йĕркелĕхе, урамсене çутăпа тивĕçтерме).

4. Выранти хăй тытăмлăх органĕсене çак Указа пурнăçа кĕртес енĕпе мерăсем йышăнма тата Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн тивĕçлĕ органĕсемпе пĕрле ял тăрăхĕсенче çурт-йĕре комплекслă майпа компактлă лартас тата вĕсене тирпей-илем кĕртес енĕпе конкурса хутшăнма кирлĕ документсемпе материалсене хатĕрлеме сĕнес.

5. Çак Указ ăна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кунран пуçласа вăя кĕрет.

**Чăваш Республикин Президенчĕ Н. ФЕДОРОВ.**

Шупашкар, 2009, кăрлач, 19, 1 №.

**Министерство кунĕнчен**

## Муркашсен опытне ырларĕç

Иртнĕ ытлари кун пирĕн районта Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политики тата архив ĕçĕсен министерствин кунĕ иртрĕ. Çавна май пирĕн района министр çумĕ Т.В. Казакова ертсе пыракан пысăк ушкăн килчĕ. Татьяна Васильевна чи малтанах район пуçлăхĕпе Ю.А. Ивановпа тĕл пулчĕ. Районăн ĕçĕ-хĕлĕпе паллаштарнипе пĕрлех Юрий Александрович культура сферинче палăртнă пысăк ĕçсем çинче те чарăнчĕ. Унтан министерство ĕçченĕсем, ушкăнсем çине пайланса, клубсемпе Культура çурчĕсен, районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕн, муниципаллă архивăн, районти историпе краеведени, Сосновкăри Н.В. Никольский ячĕллĕ тата Панкли музейĕсенче пулса, вĕсен ĕçĕ-хĕлĕпе паллашрĕç. Тепĕр икĕ ушкăн культура пайĕн тата централизациленĕ бухгалтерин документсене тишкерчĕ.

Министр çумĕ чи малтанах Муркашри Культура çуртĕнче клуб учрежденийĕсен директорĕсемпе тата художество пултарулăх ертӳçисемпе тĕл пулчĕ. Хăйĕн сăмахĕнче вăл Чăваш Республикин Президенчĕн ялсенчи культура учрежденийĕсене модернизацилессин тĕллевĕсемпе задачисем, Указ мĕнле пурнăçа кĕрсе пыни çинче чарăнчĕ.

–Хальлĕхе кашни ял тăрăхĕнчи пĕр клуба е Культура çуртне çĕнетсе база культура учрежденийĕ тума тĕллев лартрăмăр. Пĕтĕмпе республикипе 286 культура учрежденине çĕнетмелле пулсан, иртнĕ çул вĕсенчен 20-шне çĕнетсе, паянхи кун ыйтакан оборудовани вырнаçтартăмăр, - терĕ министр çумĕ. - Çапла майпа культура учрежденийĕсем укçа ĕçлесе илме пултарччăр, ял халăхĕн пушă вăхăта усăллă ирттерме тивĕçлĕ условисем пулччăр, тетпĕр.

Татьяна Васильевна хăйĕн сăмахĕнче паянхи кун кирлĕ çакнашкал Культура çуртне тăвассине конкурспа çĕнсе илмеллине палăртрĕ. Унтан министр çумĕ Яраккассинчи клубра пулса курчĕ.

– Çĕнĕ çул уявĕсене кивĕ клубрах ирттертĕмĕр, - тет клуб заведующийĕ Р.Г. Замятин.

Кĕçех Яраккассисемпе Карамалькассисем çĕнĕ клуба куçмалла. Çĕр улми лартса çитĕнтерсе сутнин усси куç умĕнчех. Çапла укçа пуçтарса хăйсен вăйĕпе турĕç вĕт клуба. Муркашри чăх-чĕп фабрики те пулăшрĕ. Çапла майпа 1,5 млн. тенкĕ укçа тухса кайрĕ ял халăхĕ туртăнакан çурта тума.

**(Вĕçĕ 2-мĕш стр.).**

**Пĕрлехи информаци кунĕнчен**

## Ыйтусем пире кашнинех пырса тивекенскерсемех

Иртнĕ юн кун республикăра Пĕрлехи информаци кунĕ иртрĕ. Çавна май пирĕн района Республикăри тарифсемпе ĕçлекен службăн ертӳçи А.В. Журавлев ертсе пыракан ушкăн килчĕ. Чи малтанах вĕсем район пуçлăхĕпе Ю.А. Ивановпа тĕл пулчĕç. Юрий Александрович вĕсене районăн 2008 çулхи социаллă-экономика аталанăвĕпе паллаштарчĕ. Юрий Александрович çавăн пекех йывăрлăхсемпе вĕсене татса памалли çул-йĕр çинче те чарăнчĕ. Унтан вĕсем район администрацийĕн яваплă ĕçченĕсемпе пĕрле ĕç коллективĕсемпе тĕл пулчĕç.

Пĕрлехи информаци кунĕнче çак ыйтусем пулчĕç: Чăваш Республикин Президенчĕ Чăваш Республикин Патшалăх Канашне янă Çырури тĕп положенисене пурнăçа кĕртмелли мерăсем, Чăваш Республикинчи гражданисене социаллă пулăшу памалли мерăсем, выранти хăй тытăмлăх органĕсенче çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатмаллисен черетĕнче тăракан граждансен пурнăç условийĕсене лайăхлатасси çинчен.

Республикăри тарифсемпе ĕçлекен службăн ертӳçи А.В. Журавлев район пуçлăхĕпе Ю.А.Ивановпа пĕрле чи малтанах Е.Андреев ячĕпе хисепленекен хуçалăх ĕçченĕсемпе тĕл пулчĕ. Хăйĕн сăмахĕнче Юрий Александрович кун йĕркинчи ыйтусем çинче тĕплĕн чарăнчĕ. 2009 çул Çĕр ĕçченĕн çулталăкĕ пулни ял хуçалăхĕшĕн йывăрлăхсене çĕнтерсе, производство тухăçлăхне хăпартма, ял çыннисен пурнăç условийĕсене татах та лайăхлатма шанăç паракан çулталăк пулнине палăртрĕ. Ытларах вара хамăр тăрăшулăхран килет. Патшалăх ку тĕлĕшпе паян та сахал мар пулăшать.

**(Вĕçĕ 2-мĕш стр.).**

**Юбилей**

## Саламлатпăр



Мăн Токшик ялĕнче пурăнакан **Татьяна Исаевна ВАДИМОВАНА** 90 çулхи юбилей ячĕпе юратса тата хисеплесе, мĕн пур ырă кăмăлтан, чи ăшă сăмахсем каласа саламлатпăр. Эсĕ ялан ĕçченлĕхӳпе, ырă кăмăлупа пире те ăс парса пурнăç çулĕ çине тухма пулăшрăн. Тайма пуç уншăн. Юбилей ячĕпе саламласа татах нумай çул пурăнма çирĕп сывлăх, çемьере килĕшӳ, тату пурнăç сунатпăр.

**Салампа: ывăлĕ, кинĕсем, 11 мăнукĕ, 7 прамăнукĕ, тăванĕсем.**

Муркашра пурăнакан **Владислав Иванович АНДРЕЕВА** сумлă юбилей ячĕпе хисеплесе, ăшшăн саламласа вăрăм кун-çул, телей сунатпăр. Владислав Иванович, кӳршĕмĕр, кашни çĕнĕ кун саншăн телейлĕ килтĕр.

Çăл тапма чарăнсан
Унăн шывĕ типет.
Çын утма пăрахсан
Ун тĕллевĕ пĕтет.

Çăл, тапма ан пăрах,
Шывлă пул, шыв ĕçтер.
Эс утма ан пăрах,
Тĕллеве ан çĕтер.

**Саламлаканĕсем: Захаровсен, Илларионовсен, Сорокинсен çемйисем тата Любăпа Аня.**



Итакачкассинче пурăнакан **Клавдия Никифоровна ПОТЯНОВАН** январĕн 25-мĕшĕнче çуралнă кунĕ. Ăна çуралнă кунĕ ячĕпе пĕтĕм чун-чĕререн тухакан ăшă туйăмсемпе саламлатпăр. Вăрăм кун-çул, иксĕлми телей, çирĕп сывлăх сĕнетпĕр. Инкек-синкек айккинчен пăрăнса ирттĕр. Ан ватăл, нумай çул хушши пурăн, çăл куç пек тапса тăракан вăй-хал, лăпкă пурнăç сунатпăр. Тайма пуç сана пуриншĕн те.

**Саламлаканĕсем: ывăлĕ, йăмăкĕ, аппăшĕ, тăванĕсем, юлташĕсем, пĕрле ĕçленĕ учительсем.**